УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО
«Чувашский республиканский
институт образования»
Минобразования Чувашии
………………С.В. Петрова
«……»……………2019 г.

**Государственная итоговая аттестация по образовательным программам среднего общего образования в форме единого республиканского экзамена**

**Кодификатор**
элементов содержания и требований к уровню подготовки выпускников образовательных организаций для проведения в 2020 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку

Подготовлен кафедрой этнокультурного образования
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии



**Чăваш чĕлхипе тытмалли
республикăн пĕрлехи экзаменĕн кодификаторĕ**

Республикăн пĕрлехи экзаменĕн кодификаторĕ тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тытăмĕпе содержанине уçса паракан документ шутланать.

Чăваш шкулĕн 11-мĕш класне пĕтернĕ май чăваш чĕлхипе тытмалли экзамена ирттермелли йĕркене, экзамен материалне хатĕрлессипе çыхăннă ĕçсене Чăваш Республикин вĕренÿ тата çамрăксен политики министерстви кăтартса парать. Экзамен содержанийĕ министерство йышăннă документсенчи нормăпа килĕшсе тăрать.

**I пай. Экзаменра тĕрĕслекен пĕлÿ содержанийĕн элеменчĕсен йĕрки**

Ку пайра республикăн пĕрлехи экзаменĕнче тĕрĕслекен пĕлÿ содержанийĕн элеменчĕсене çырса панă.

| Код | | Тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен ĕçĕсене тĕрĕслемелли элементсем |
|---|---|---|
| *1.* | | ***Фонетика*** |
| | 1.1 | Сасăсемпе сас паллисем |
| | 1.2 | Сăмахăн фонетика тишкерĕвĕ |
| *2.* | | ***Лексика тата фразеологи*** |
| | 2.1 | Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ |
| | 2.2 | Синонимсем. Антонимсем. Омонимсем |
| | 2.3 | Сăмах çаврăнăшĕсем |
| | 2.4 | Пулса кайни тата усă курни тăрăх ушкăнланă сăмахсем |
| | 2.5 | Лексика тишкерĕвĕ |
| *3.* | | ***Морфемика тата сăмах пулăвĕ*** |
| | 3.1 | Сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсем (морфемăсем) |
| | 3.2 | Сăмахăн морфема тишкерĕвĕ |
| | 3.3 | Сăмах пулăвĕн мелĕсем |
| | 3.4 | Сăмаха пулăвĕ енчен тишкерни |
| *4.* | | ***Грамматика. Морфологи*** |
| | 4.1 | Хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем |
| | 4.2 | Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем |
| | 4.3 | Сăмахсен морфологи тишкерĕвĕ |
| *5.* | | ***Грамматика. Синтаксис*** |
| | 5.1 | Сăмах майлашăвĕ |
| | 5.2 | Предложени. Предложенин грамматика никĕсĕ. Подлежащипе сказуемăй – предложенин тĕп членĕсем |
| | 5.3 | Предложенин кĕçĕн членĕсем |
| | 5.4 | Икĕ тĕп членлĕ тата тĕп членсăр предложенисем |
| | 5.5 | Анлă тата ансăр предложенисем |
| | 5.6 | Тулли тата тулли мар предложенисем |

| | | |
|---|---|---|
| | 5.7 | Кăткăсланнă хутсăр предложенисем |
| | 5.8 | Хутлă предложенисем |
| | 5.9 | Хутлă предложенин тĕсĕсем |
| | 5.10 | Кăткăсланнă хутлă предложенисем |
| | 5.11 | Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем |
| | 5.12 | Хутсăр предложенисен синтаксис тишкерĕвĕ |
| | 5.13 | Хутлă предложенисен синтаксис тишкерĕвĕ |
| | 5.14 | Синтаксис тишкерĕвĕ (пĕтĕмлетни) |
| *6.* | | ***Орфографи*** |
| | 6.1 | Орфограмма |
| | 6.2 | Сасăсен çемçĕлĕхĕпе хытăлăхне çырура палăртасси |
| | 6.3 | Сасăсен кĕскелĕхĕпе вăрăмлăхне çырура палăртасси |
| | 6.4 | Мăшăр, хутлă, икĕ хут калакан сăмахсене çырасси |
| | 6.5 | Тĕрлĕ пуплев пайĕсене çырасси |
| | 6.6 | Сăмахсене уйрăм, пĕрле тата дефиспа çырасси |
| | 6.6. | Пайăр ятсене çырасси |
| | 6.7 | Орфографи тишкерĕвĕ |
| *7.* | | ***Пунктуаци*** |
| | 7.1 | Подлежащипе сказуемăй хушшине чарăну паллисем лартасси |
| | 7.2 | Пĕр йышши членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси |
| | 7.3 | Уйрăмлатнă членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси |
| | 7.4 | Кӳртĕм сăмахлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси |
| | 7.5 | Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси |
| | 7.6 | Хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси |
| | 7.7 | Пунктуаци тишкерĕвĕ |
| *8.* | | ***Пуплев*** |
| | 8.1 | Текст. Текст тытăмĕ |
| | 8.2 | Текстри предложенисен çыхăнăвĕн мелĕсем |
| | 8.3 | Пуплевĕн стиль уйрăмлăхĕсем |
| | 8.4 | Чĕлхе мелĕсене хутшăну темипе, тĕллевĕпе, адресачĕпе килĕшӳллĕ суйласа илни |
| | 8.5. | Текст тишкерĕвĕ |
| | 8.6 | Тĕрле стильпе текстсем çырасси |
| *9.* | | ***Чĕлхе нормисем*** |
| | 9.1 | Орфоэпи нормисем |
| | 9.2 | Лексика нормисем |
| | 9.3 | Грамматика (морфологи) нормисем |
| | 9.4 | Грамматика (синтаксис) нормисем |
| *10.* | | ***Тăван (чăваш) чĕлхен илемĕ*** |
| | 10.1 | Илемлĕх мелĕсене тишкересси |





| | | |
|---|---|---|
| *11.* | | ***Тĕрлĕ жанрпа тата стильпе çырнă текстсене информаци енчен тишкерни*** |

**II пай. «Тĕп вĕренĕвĕн вĕренӳ программисене алла илнĕ вĕренекенсен пĕлӳ пахалăхне тĕрĕслекен хăнăхусем».**

Ку пайра республикăн пĕрлехи экзаменĕнче тĕрĕслекен хăнăхусене çырса панă.

| Код | | **Пĕрлехи патшалăх экзаменĕнче тĕрĕслемелли хăнăхусем** | **Вăтам пĕлӳ стандарчĕн шайĕ** |
|---|---|---|---|
| **1.** | | **Тĕрлĕ тишкерӳ** | |
| | 1.1. | Чĕлхе единицисен, пулăмĕсемпе факчĕсен тĕрлĕ тишкерĕвне туни | Тĕп<br>Профиль |
| | 1.2. | Пуплев тĕлĕшĕнчен харпăр хăйне хакла-ни, çыруллă текстсене чĕлхе тĕлĕшĕнчен мĕнлерех йĕркеленине тата лартнă задачăсене пурнăçа кĕртнине кура хакла-ни | Тĕп<br>Профиль |
| | 1.3. | Норма варианчĕсене, ятарласа тата ятарламасăр пăснă чĕлхе нормисене уйăрни | Профиль |
| | 1.4 | Тĕрлĕ (вĕренӳпе наука, ĕç, публицистика, калаçу, илемлĕ) стильпе çырнă текстсене чĕлхе енчен тишкерни | Тĕп<br>Профиль |
| | 1.5 | Чăваш тата ытти халăхăн чĕлхепе истори, чĕлхепе культура факчĕсен çыхăнăвне ăнлантарни | Профиль |
| **2.** | | **Вулав** | |
| | 2.1 | Вулавăн тĕрлĕ тĕсне алла илни | Тĕп<br>Профиль |
| | 2.2 | Тĕрлĕ çăлкуçран (вĕренӳпе наука тексчĕсенчен, справочниксенчен, массăллă информаци хатĕрĕсенчен) кирлĕ информацие шыраса тупма пĕлни | Тĕп<br>Профиль |
| | 2.3 | Çырулла текста информаци енчен тĕрлĕ мелпа тишкерни | Тĕп<br>Профиль |
| **3.** | | **Çыру** | |
| | 3.1 | Пĕр-пĕр стиле, жанра тивĕçтерекен текст туни, харпăр хăй текстне редакцилени | Тĕп<br>Профиль |
| | 3.2 | Пуплевлĕ хутшăнура чăваш литература чĕлхин орфографипе пунктуаци, грамматикăпа пуплев нормисене пăхăнни, | Тĕп<br>Профиль |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | харпăр хăй калаçăвĕнче чăваш чĕлхин синоними ресурсĕсемпе усă курни | |
| | 3.3 | Çырура чăваш литература чĕлхин орфографипе пунктуаци, грамматикăпа пуплев нормисене пăхăнни | Тĕп<br>Профиль |
| | 3.4 | Хутшăнăвăн тĕрлĕ сферипе лару-тăрăвĕнче, çав хушăрах тавлашуллă ыйтусене сӳтсе явнă чух та, пуплев культурин нормисене тытса пыни | Тĕп<br>Профиль |
| **4.** | | **Тăван чĕлхе уйрăмлăхĕсене пĕлни** | |
| | | *Наци, патшалăх, тĕнче чĕлхи, нацисем хушшинчи хутшăну чĕлхи* ăнлавсен пĕлтерĕшĕсене пĕлни | Профиль |
| **5.** | | Чăваштата вырăс чĕлхисем хушшинчи фонетика, лексика, грамма тика пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене пĕлни, чăваш тата ытти халехсен пуплев этикетне пĕлни | Тĕп<br>Профиль |
| **6.** | | Чăван чĕлхин наци хăй евĕрлĕхне ăнланни | Тĕп<br>Профиль |
| **7.** | | Ытти культура çыннисемпе хутшăнма пултарни | Тĕп<br>Профиль |
| **8.** | | Вырăсларан чăвашла тĕрлĕ текста куçарни | Тĕп<br>Профиль |